# Сказка Как старик дураков искал



Пĕр карчăк кăмака умĕнчи кашта ҫине типĕтме вутă хунă тет. Вутти кашта хуҫăлнипе йăтăнса аннă тет те карчăк:

— Эпĕ ывăл ҫуратнă пулсан, ман кин пулнă пулсан, кинĕн ачи пулнă пулсан вилетчĕ вĕт, вилетчĕ! — тесе макăрать тет.

Ҫакăн старикĕ тултан кĕчĕ те:

— Ма макăра? — тесе ыйтать.

Карчăкĕ хăй мĕншĕн макăрнине каласа парать.

— Эх, ухмах, ухмах! — тет старик. — Сан пек ухмах тĕнчере пур-ши? — тет. Вара тĕнче тăрăх ухмах шырама тухса каять.

Пĕр ҫын пӳрт лартнă, кантăкне кастарман. Ҫав ҫын алăка уҫса пăрахать тет те пӳрте ҫутă кĕртет тет. Ҫутта пӳрте хупса хăварас тесе чупса пырса алăка хупать тет, анчах ҫутă пӳрте юлмасть тет.

Ҫак ҫынна ухмах шырама тухнă старик курнă та:

— Мĕн тăватăн эс? — тесе ыйтать.

Леш калать:

— Пӳрт лартрăм та, ҫутă ҫук-ха. Пӳрте ҫутă хупатăп, — тет.

— Эх, ухмах, ухмах, — тет старик, — пӳртре ҫутă пултăр тесен чӳрече касаҫҫĕ! — тет.

Тепĕр хĕрарăм чăхха тытнă та тарăхса хĕнет.

— Ма хӗнен ара? — ыйтать старик.

— Чăхă чӗпӗ кăларчӗ; чӗпписем пур — сӗчӗ çук, çавăншăн хӗнеп, — тет лешӗ.

— Эх, ухмах, ухмах! — тет старик. — Ăна кӗрпе илеççӗ те, кӗтӗр-кӗтӗр! тесе чӗпсене сапса параççӗ, — тет.

Унтан старик аптăранипе:

— Тӗнчере ухмах татах та нумай пуль, — тесе килнех таврăнчӗ тет.

Мультимедийная онлайн-библиотека
“Сказки Поволжья”

Иллюстрированые и озвученные сказки народов Поволжья.